Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

14 (7868) № * Шăмат кун, 2011 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 26-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Ӳсĕм кашнинченех килет

**Ĕçре пултаруллисем**

*Муркаш райповĕн производство кăтартăвĕсем уйăхсерен ӳссе пыни вăрттăнлăх мар. Ахальтен мар ĕнтĕ коллектив республика шайĕнче кăна мар, Раççей шайĕнче те ырă ятлисен шутĕнче, пĕр хут кăна мар çĕнтерӳçĕ пулса тăнă, дипломсене тивĕçнĕ.*

*Анчах та ӳсĕм хăй тĕллĕн килмест, ăна çынсем тăваççĕ. Çавăнпа та суту-илӳ, обществăлла апатлану предприятийĕсенче вăй хуракансем тĕлĕшпе ытларах ыррине кăна калама пулать. Вăл шутра Муркашри «Стройхозтовары» магазинта ĕçлекенсем пирки те.*

*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан сутуçăсем Валентина Михайловна Софронова çак ĕçре 8 çул, Алевтина Алексеевна Николаева 24 çул, Ирина Валерьяновна Гаврилова заведующи 11 çул тăрăшаççĕ. Опычĕ те çителĕклех вĕсен, кунпа пĕрлех тавар туянакансем хăйсемпе вашават пулнишĕн, кирлĕ тавара суйласа илме пулăшма ӳркенменнишĕн те хисеплеççĕ вĕсене, тав сăмахĕ калаççĕ.*



*В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

## Вăхăтра ăнланнине мĕн çиттĕр?

**Ял тăрăхĕсенче профилактика кунĕ пырать**

***Февралĕн 17-мĕшĕнче профилактика кунĕ Йӳçкасси ял тăрăхĕнче иртрĕ. Район тата ял тăрăхĕн администрацийĕсем çумĕнчи профилактика Канашĕсен, районти çул çитменнисемпе вĕсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен комиссин пĕрлехи ларăвĕнчен пуçланчĕ вăл. Ун хыççăн 6 ушкăна пайланса ĕçлерĕç профилактика кунне хутшăнакансем. Ăнаççăр çемьесенче, опекунсем патĕнче пулчĕç. Саккуна пăсса учетра тăракансемпе тĕл пулса калаçрĕç, ку ял тăрăхĕнчи 21 сунарçăран 6-шĕн патĕнче пулса вĕсем сунар пăшалне епле упранипе паллашрĕç. Магазинсенче пулса вĕсенчи хӳтĕлев системине тишкерчĕç, шкул ачисемпе тĕл пулса калаçу ирттерчĕç. Пĕтĕмпе çак кун милици ĕçченĕсем право йĕркине административлă майпа пăснă фактсемпе 8 протокол çырчĕç.***

**ЙĔРЕТ ПУЛĔ АМĂШĔН ЧУНĔ...**

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С.Н. Иванов палăртнă тăрăх ял тăрăхĕн администрацийĕнче учетра тăракан ăнаççăр çемьесем кунта 5. Шутласассăн 5 çемье нумай та мар пек. Анчах çав кашни çемьере ашшĕ-амăшĕ эрехпе иртĕхнине пула миçе ача нуша курать. Калăпăр, пĕр çемье пултăр, çавăнта пĕр ача пултăр. Ку та тем пысăкăш инкек. Пĕр ачан пуласлăхĕ вăл пурнăçа ăнланса илме ĕлкĕриччене хуçăлать. Хăйне çуратнă çывăх çынсен çăмăлттайлăхне пула унăн пĕтĕм пурнăçĕ урăхла килсе тухма пултарать. Çак ачашăн тем пысăкăш инкек ку. Тĕнче те хитре курăнмасть уншăн.

Çакна шута илсе ял тăрăхĕ çумĕнчи профилактика Канашĕпе çемьесемпе ĕçлекен комисси членĕсем тăтăш ăнаççăр çемьесенче пулнине, вĕсене ял тăрăхне чĕнтерсе калаçнине ырламалла кăна. Çакăн усси пуррине палăртрĕ Сергей Николаевич. Иртнĕ çул вырăнти профилактика Канашĕн 7 ларăвĕнче 11 административлă материал пăхса тухнă.

Профилактика кунĕнче учетра тăракан çав çемьесенче пулнă чух та лару-тăру ырă енне улшăнни палăрчĕ. Анчах та пур çемьере те мар çав. Тултан пăхсан çирĕп курăнакан çуртра инкек пытанать: ашшĕпе, асламăшĕпе тата вырăнпа выртакан аслашшĕпе пурăнакан хĕр ачашăн. Вăхăтра тӳлейменнипе çут çанталăк газĕпе ăшăтма май çук ĕнтĕ пӳрте. Газ пама чарнă. Шартлама сивĕре çак сивĕ пӳрте ăçтан чун турттăр-ха ачан. Эпир пынă чух та ашшĕ чĕлхе çавăрса калаçайми ӳсĕрччĕ. Пӳртре хăçан юлашки хут хĕр арăм алли пулни те палăрмасть. Асламăшĕ хĕр ача шкултан килнĕ çĕре пăттине пĕçерсе хунă-ха, анчах вăл та эрех черккине алла тытнăскер ĕçмесĕр лартайман курăнать сĕтел çине каялла. Самаях хĕрĕнкĕччĕ 60 урлă каçнă хĕр арăм. Миçе хут утиялпа витĕнсе çывăрмалла ачан çак сивĕ пӳртре çĕр каçма? Камăн ăшă сăмахĕ ăшăтĕ унăн чĕрине? Йывăр чире пула çамрăклах çĕре кĕнĕ амăшĕн чунĕ те макăрать пулĕ хăйĕн тăван тĕпренчĕкĕ çакăн пек нушаллă çитĕннине курса. Анчах мĕнпе пулăшайĕ вăл халь тин ачана? Пулăшма пултараканнисем вара... ытлашшиех васкамаççĕ çав утăма тума.

(Вĕçĕ 2 стр.).

## Сивĕ хĕл хыçа юлать

**Выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсен пĕрлехи кунĕнчен**

***Нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕнче районти ял хуçалăх производство кооперативĕсенчи обществăлла выльăх-чĕрлĕх пăхакансен пĕрлехи кунĕ иртрĕ. Район администрацийĕн ответлă специалисчĕсем çак кун кашни хуçалăхри фермăнах çитсе курма тăрăшрĕç. Ял хуçалăх пайĕн тĕп агрономĕпе А. Павловпа выльăхсен ăратлăхĕпе ĕçлекен зоотехникĕ И. Михайлова çак кун «Свобода» тата «Герой» хуçалăхсенчи сĕт фермисенче пулса курчĕç.***

Иртнĕ çулхи çу кунĕсенчи шăрăх ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсене паян та канăç памасть. Ялсенче пурăнакан тата килти хушма хуçалăха тытса пыракан уйрăм граждансемпе пĕрлех пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем умĕнче те паян выльăх апачĕн çителĕксĕрлĕхĕ çивĕч тăрать. Çавна пулах производство та уксахлать. Муркаш енри ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен ытти харпăрлăх формисем район администрацийĕн ял хуçалăх пайне талăксеренхи сăвăм пирки оперативлă тăратнă кăтартусемпе нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕнче районти вăтам сăвăм пĕр ĕне пуçне кăçал пĕлтĕрхинчен пĕр килограмм сахалрах пулнă: 10,7 килограмм. Çав вăхăтрах вăл Е. Андреев яч. хис., Чапаев яч. хис., Чкалов яч. хис., «Передовик» хуçалăхсенче ӳснĕ: 0,7 килограмран пуçласа 5,3 килограмм таран.

– Хамăр тăрăшулăх çумне патшалăх пулăшăвне хушсан аталану çулне алăран вĕçертместпĕрех. Иртнĕ çу кунĕсенче тăрăшсах выльăх апачĕ янтăларăмăр. Çĕнĕлĕхсене алла илсе пĕлтĕр нумай сарайĕнче юсав ĕçĕсем ирттертĕмĕр. Нумаях пулмасть сĕт пахалăхĕшĕн тăрăшсах çĕнĕ сĕт линине хута ятăмăр. Çакă йăлтах хуçалăх ĕçченĕсен ĕç кăтартăвĕ. Куншăн эпир савăнатпăр, – терĕ ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ-заводăн ертӳçи В. Ананьев.

Кашмашри ĕне ферминче хĕле хатĕрленсе юсав ĕçĕсем ирттерни тата сĕт линине çĕнĕрен вырнаçтарнипе ĕçлени тӳрех курăнчĕ. Кунпа пĕрлех фермăра вăй хуракансен те ĕçлес туйăмĕ начар мар.

Ферма заведующийĕ Ю. Петровский сăмахĕнчен выльăхсене çăва кăларма апат çитмелле. Сумалли 147 пуç ĕне патĕнче паян пурĕ 4 доярка ĕçлет. Ĕçсем калкал пыччăр тесе хуçалăх хамăр республикăран та, Чул хула облаçĕпе Алтай крайĕнчен те утă, тырă, комбикорм нумай туяннă. Выльăхсене хĕл каçарассипе тата продуктивлăха тивĕçлĕ шайра тытассипе тĕллевлĕ ĕçлени Çатракассинчи ĕне ферминче те куç умĕнчен каймарĕ.

Кашмашсемпе Çатракассисем хăйсен ĕçĕ пынипе пĕрлех кӳршĕсен хуйхи-суйхине те пĕрле пайлаççĕ. Паян кунтан Ильич яч. хис., «Герой» хуçалăхсем улăм турттараççĕ.

– Кашмашсем пире улăм сутма килĕшни выльăх апачĕ шыраса инçе çула кăлармарĕ. Кунпа пĕрлех эпир утăна Владимир, Рязань облаçĕсемпе Тутарстан Республикинчен самай туянтăмăр, – терĕç «Герой» хуçалăхăн Çĕньял Шурчари сĕт фермине çитсен. «Ĕмĕчĕсем пур-ха, анчах вĕсене пурнăçа кĕртме ĕçлес пулать», – сăмах хушрĕç «Свобода» хуçалăха улăм преслама тухса кайма хатĕрленнĕ уй-хир бригадин ĕçченĕсем.

...Кашнийĕнех хăйĕн ыйтăвĕсем, ĕмĕчĕсем. Вĕсене вара пĕрле пулсан çеç татса пама май пуррине те хуçалăхсенче паян кашниех курса-пĕлсе тăрать.

**А. БЕЛОВ.**

**Район администрацийĕнче**

## Тухăçлă ĕçшĕн

Нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн, обществăлла ĕçре активлă пулнăшăн Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн администрацийĕ ыйтнипе Мăн Сĕнтĕр ял библиотекин халăха информаципе тивĕçтерекен пайĕн пуçлăхне **Светлана Георгиевна СОКОЛОВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

**Граждансене йышăнаççĕ**

## Сирĕн ыйтусем пур пулсан

Район прокуратурин Муркаш ялĕнчи Мир урамĕнчи 6-мĕш çуртĕнче граждансене хăйсене интереслентерекен ыйтусемпе Раççей Федерацийĕн следстви комитечĕн Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн сотрудникĕсем йышăнассине йĕркеленĕ. Пай ертӳçи Е.Г. Виссаров кашни уйăхрах 4-мĕш ытлари кунсенче 10 сехетрен тытăнса 12 сехетчен, уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсен следователĕ В.В. Долгов тунти кунсенче 9 сехетрен тытăнса 12 сехетчен йышăнаççĕ.

Кунсăр пуçне кашни уйăхăн 3-мĕш кĕçнерни кунĕнчех 10 сехетрен тытăнса 12 сехетчен граждансене Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн çуртĕнче РФ следстви комитечĕн Чăваш Республикинчи следстви управленийĕн ертӳçи йышăнать.

**Саламлатпăр**





Хаклă мăшăра, юратнă аннене, çепĕç чунлă асаннене, хисеплĕ тăвана – Ятман ялĕнче пурăнакан **Алиса Ефремовна ПЕТРОВĂНА** 80 çул тултарнă ятпа чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламласа çĕр çинчи мĕн пур ырлăха сунатпăр. Аттепе – **Владимир Петрович ПЕТРОВПА** – иксĕр шăкăлшăкăл пурăнса бриллиант туй çулне çитрĕр. Пире 7 ачана пăхса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнăшăн, ырă сăмахпа вĕрентсе пынăшăн, йывăрлăхра ăнланнăшăн, пулăшнăшăн, пурăнма вăй-хăват хушса пынăшăн сирĕн умăрта çĕре çити пуç таятпăр. Хисеплĕ аттепе анне! Татах нумай çул таса сывлăхпа пире савăнтарса пурăнма Турри пиллĕх патăр сире.

**Пысăк салампа: хĕрĕсемпе кĕрĕвĕсем, ывăлĕсемпе кинĕсем, 16 мăнукĕ, 7 кĕçĕн мăнукĕ, Шетьмĕпуçĕнчи Михайловсем, тăванĕсем.**

Хаклă та юратнă çыннăмăра – аттене, кукаçие – Хуракасси выççăлккинче пурăнакан **Виталий Владимирович КРЫЛОВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Аттемĕр! Юратнă çыннăмăр! Санăн ĕмĕрӳ вăрăм, сывлăху çирĕп пултăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр. Пурнăç çулĕпе утма вăй-халу çăл куç пек тапса тăтăр. Эпир сана юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм кун-çул сунатпăр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сана нумай-нумай çул усратăр.

**Пысăк салампа: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕ, ывăлĕ, мăнукĕсем, тăхлачи.**

**Çырăнтару**

**Хаклă вулаканăм!**

**Райхаçата иккĕмĕш çур çултан илсе тăма çырăнтарас тапхăр малалла пырать. Çырăнтару хакĕ унчченхиех – 191 тенкĕ те 70 пус (ултă уйăха).**

**Хастар ентешсем**

## Муркашсен мăнаçлăхĕ

Февралĕн 24-мĕшĕнче Италире иртнĕ Европа чемпионачĕ ăнсăртран Муркаш ене те пырса тиврĕ. Пирĕн ентеше, Рыккакассинче çуралса ӳснĕ çамрăк та хастар Вячеслав Якимов биатлониста тата Н. Якушов спортсмена арçынсен эстафета командине кĕртме пĕр кун маларах йышăну тăваççĕ. Çак утăма тума вара тренерсене арçынсен командинчи икĕ биатлонист чирлесе ӳкни хистет.

Анчах та çамрăксем хăйсене шаннине тӳрре кăларма пултарнă. Николай Якушов хыççăн иккĕмĕш тапхăрта ăмăртса Вячеслав Акимов командăна мала кăларма пултарать. Тăваттăмĕш тапхăр хыççăн Раççейри арçынсен команди кĕмĕл призер пулса тăрать. Нумаях пулмасть Чехире иртнĕ юниорсен эстафета командине лекейменшĕн Акимовшăн ку çитĕнӳ – чи хаклă парне.

# «Нимелле ĕçлессине те манмалла мар»

**Сăмах – ял тăрăхĕн пуçлăхне**

**Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен суйлавĕ иртнĕренпе тăватă уйăх çитрĕ ĕнтĕ. Ултă ял тăрăхĕнчи суйлавçăсем ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем пулма унччен çак ĕçпе çыхăнман çынсене шаннăччĕ. Вĕсенчен пĕри – Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валерий Витальевич ФОМИН. Унпа тĕл пулнă май çĕнĕ ĕçпе çыхăннă малтанхи пĕтĕмлетӳсене тума, малашлăхри ĕçсене епле курни пирки каласа пама ыйтрăм.**



**– Валерий Витальевич, тăватă уйăх пысăк тапхăрах мар тейĕпĕр. Çĕнĕ ĕçе хăнăхса кăна пыратăр. Апла пулин те малтанхи хăш-пĕр пĕтĕмлетӳсем тума, малашлăхри ĕçсене палăртма, ĕçре мĕнле принципсем çине таянмаллине уçăмлатма пултаратăрах пулĕ?**

– Чăвашсем авалах çапла каланине пурте ас тăваççĕ пулĕ: пĕччен суран – типсех пырать, халăх сурать – кӳлĕ пулать. Питĕ тĕрĕс сăмахсем. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕн кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ те халăхпа пĕр чĕлхе тупма пĕлессипе, вĕсене пĕрлехи ĕçе явăçтарма пултарассипе, кулленхи ĕçре вĕсен интересĕсене малти вырăна кăларассипе тачă çыхăннă. Ку енĕпе вара манăн опыт тени çук теместĕп. Ял тăрăхĕн пуçлăхне суйланиччен 1989 çултанпа Юнкă шкулĕнче вăй хунă. 1995 çулта заочно майпа Чул хулари педагогика университетне вĕренсе пĕтернĕ. Шкулта технологи, черчени предмечĕсене вĕрентнĕ.

Сăмах май халĕ те манăн шкулта уроксем пур. Ял çыннисемшĕн эпĕ хама курман-илтмен çĕнĕ çын тесе шутламастăп. Учительте ĕçленĕ май вĕренекенсемпе кăна мар, вĕсен ашшĕ-амăшĕсемпе те тăтăшах хутшăнма, тĕрлĕрен ыйтусене пĕрле канашласа татса пама тивнĕ.

**– Эсир мĕн каланине ăнланмалла. Çапах та çавна пĕлес килет. Пур чухне те ял çыннисемпе пĕр чĕлхе тупма пулать-и, пĕрлехи ĕç пĕлтерĕшне пурте ăнланаççĕ-и?**

– Вăрттăнлăх мар, хальлĕхе çавна туса парăр, ку е вăл кирлĕ тесе кăна пакăлтатма хăнăхнисем те çук мар-ха. Вĕсене çавна каланă пулăттăм. Ĕлĕкхи пурнăç иртсе кайрĕ пулĕ. Çĕнĕлле шухăшлама, пурăнма хăнăхас пулать. Вырăнти ыйтусенчен ытларахăшне хамăрăнах, хамăрăн пĕрлехи вăйпах татса пама тивет. Çӳлтен пăрахса парасса кĕтсе лараймăпăр. Аякран килсе никам та нимĕн те туса парас çук. Телее, çак чăнлăха ăнланакансем пирĕн хушăра ытларах. Апла пулсан ыйтусене те малашне ăнăçлăрах татса пама майсем пуласси куç кĕрет.

**– Пĕччен хулă хуçăлать теççĕ. Хăвăр умăрти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса парассипе камсем çине ытларах шанăç хуратăр? Камсем сире кулленхи ĕçре пулăшса пыраççĕ-ха?**

– Çук мар вĕсем. Депутатсенчен, старостăсенчен ытларахăшĕ хăйсене ял çыннисем шаннине тӳрре кăларассишĕн çине тăрать. Кунта чи малтанах Пĕрремĕш Май выççăлккин старостине Олег Аргандеева, Çармăçкассинчи депутата, çамрăксен канашĕн председательне Валентина Красновăна, Кăпасри депутата Людмила Кудряшовăна, Культура çурчĕн художество ертӳçине Меркурий Ягунова ырăпа асăннă пулăттăм. Кунпа пĕрлех район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Лилия Тарасова, хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн генеральнăй директорĕ Владислав Семенов, шкул директорĕ Владимир Федоров, «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçи Валерий Кондратьев та вырăнти ыйтусене татса панин пĕлтерĕшне тĕрĕс ăнланаççĕ. Ял тăрăхĕ умĕнче тăракан задачăсене хăйсен мар, ют тесе шутламаççĕ. Тав сăмахĕ кăна калама пултаратăп вĕсем тĕлĕшпе.

**– Валерий Витальевич, вырăнсенче ытларах чухне шыв ыйтăвĕ çивĕч тăни куç кĕрет. Сирĕн патра та ку енĕпе лару-тăру ытлашши улшăнса тăмасть пулĕ?**

– Çаплах. Шыв пăрăхĕсем вуншар çул маларах хурса хăварнисем-çке. Чылай çĕрте вĕсем çĕрĕшсе шăтса пĕтнĕ ĕнтĕ. Пĕр çĕрте саплатăн – тепĕр çĕрте шăтса каять. Нимĕн тума та çук, шыв пăрăхĕсем çĕнĕрен хурассипе республика пулăшăвĕ килме тытăниччен çаплипех хальлĕхе саплашкаласа пурăнма тивет.

Акă тата Юнкăна пырса кĕнĕ çĕрте шыв башнин насусĕ çĕр айне пулнă, кăларма май çук. Проектсем çĕнĕрен хатĕрлесе çĕнĕ скважина чавасси, урăх вырăнта башня вырнаçтарасси вара питех те хакла кайса ларать. Апла пулсан киввинех юсаса йĕркене кĕртме тивет.

Кунсăр пуçне тата çăлсем чавассипе ытларах тимлемелле пулать. Çывăх вăхăтрах Коминтерн выççăлккинче çăл чавма палăртатпăр, Çармăçкассинче юсав ĕçĕсем туса ирттермелле. Юнкăпуçĕнче çăл валли тимĕр-бетон ункăсене кӳрсе килнĕ ĕнтĕ, ĕçе йĕркелемелле кăна.

Пĕвесем пирки те чарăнса тăнă пулăттăм. Чылай çĕрте вĕсем е татса кайнă, е юшкăнпа тулса ларнă. Майĕпен вĕсене те йĕркене кĕртес пулать.

**– Çурхи кунсем çитсе килеççĕ. Юр ирĕлнĕ май вара çуллен тĕрлĕ çӳп-çап, ăпăр-тапăр çиеле тухать.**

– Çакă та пĕлтерĕшлĕ ыйту. Тĕрĕссипе ку енĕпе татăклă улшăну пулмалла пек ĕнтĕ. Ивановка çывăхĕнче пĕлтĕр йăла каяшĕсен ятарлă полигонĕ хута кайрĕ. Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕпе килĕшӳ туса каяша унта турттарассине йĕркеленĕ. Хальлĕхе çакăнпа çыхăннă тăкаксене те хамăр администраци шучĕпе саплаштарнă. Апла пулин те çӳп-çапа ăçта килчĕ унта кайса тăкакансем çук мар. Вĕсемшĕн пулсан хăйĕн кил таврашĕ таса пултăр, ытти харама тенĕ пек. Тĕрĕссипе тавралăхĕ хамăршăнах вĕт-ха. Çапла вара иртнĕ çул Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕнчен КамАЗ автомашинăпа экскаватор чĕнсе илсе Пĕрремĕш Май выççăлкки тата Кăпас ялĕсем çывăхĕнчи санкциленмен икĕ свалкăри каяша тиесе тухрăмăр. Малашне кун пек йĕркесĕрлĕх ан пултăр тесе ытларах çине тăма тивет.

**– Ыйтусен ыйтăвĕ вăл – бюджет хĕсĕкки, яланах укçа-тенкĕ çитменни. Ку йывăрлăхран тухмалли çул-йĕре мĕнре куратăр?**

– Чи малтанах çĕр, пурлăх налукĕсене пухассине 100 процентчĕпех пурнăçлас пулать. Хушма укçа-тенкĕ илмелли майсене те шырамалла. Акă пирĕн патра аптека, суту-илӳ киоскĕ, кредит кооперативĕ пӳлĕмсем арендăна илнĕ. Ку та хушма укçа-тенкĕ çăл куçĕ пулса тăрать. Тӳлевлĕ тĕрлĕ мероприятисем ирттерессине те практикăламалла. Çапах та чи пĕрремĕшĕ вăл – вырăнти производствăна аталантарасси. Акă Сергей Григорьев «Фаворит» чикĕллĕ яваплăхлă общество йĕркелерĕ. Халĕ вăл арендăна илнĕ фермăра хурсем, кăвакалсем, индокăвакалсем, чăх-чĕп ĕрчетет. Çывăхрах пĕве пĕвелеттересшĕн. Вăт çавăн пек çынсем ытларах пулсан тем пекехчĕ.

Юлашкинчен татах тепĕр саманта та палăртса хăварнă пулăттăм. Хамăрăн авалхи несĕлсен пурнăç мелĕсене те манма юрамасть. Ун чухне халăхпа пурнăçламалли пысăк ĕçсене ытларах чухне укçалла мар, ниме шучĕпе тӳлевсĕр тунă. Мĕншĕн тесен ăнланнă: çакă вăл такам валли мар, хăйсемшĕнех. Пирĕн те çакна ăнланма вăхăт.

**В. ШАПОШНИКОВ** калаçнă.

Ял тăрăхĕсенче профилактика кунĕ пырать

## Вăхăтра ăнланнине мĕн çиттĕр?

(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.).

Хамăрах, çитĕннисемех, пăсатпăр пулĕ çав ачасене. Вăхăтра тимлĕх уйăраймасăр, вĕсен кăмăлне курма тăрăшмасăр, вĕсем валли вăхăт тупаймасăр, хамăр интерессене маларах хурса. Паян шкула час-час сиктерекен арçын ача та тĕл пулура малараххри çулсенче хăйне тăван мар ашшĕ вăхăт-вăхăт кӳрентернине асăнчĕ. Çав йывăр алăсенчен хăраса килтен тухса тарнă вăхăтсем ача характерĕнче те хăйĕн йĕрне хăвармасăр иртмеççĕ пулĕ çав. Чунра шалта ача хăйне ытти тантăшĕсенчен уйрăмрах туйма пуçлать. Ку вара вĕсен хутшăнăвĕсенче те шăйрăксем кăларса тăрать. Класс ертӳçи çак проблемăна вăхăтра асăрхаса тивĕçлĕ утăмсем туни кирлĕ кунта. Ку енĕпе Йӳçкасси шкулĕнче калаçусем ирттереççĕ-ха. Анчах та вăхăтран вăхăта ачасем пĕри тепринчен «кулма» хăтланни – кашни шкултах, кашни класрах кирек хăш вăхăтра сиксе тухма пултаракан пысăк калăпăшлă ыйту. Çавăнпа та класс ертӳçисемпе социаллă педагогсен ачасем патне татах та çывăхарах пулмалли çинчен калать ку.

**ЫРРИ ТЕ, УСАЛЛИ ТЕ АСЛИСЕНЧЕНЕХ ПУÇЛАНАТЬ...**

Анчах та проблема шкултан мар, килтенех пуçланать. Ачана çемьере тĕрĕс воспитани парса ӳстереççĕ пулсан, ăна, ун шухăшне хисеплеççĕ пулсан, вăл хăйне çирĕп туять, хăйĕн «хакне» пĕлет. Хăйне ыттисене кӳрентерме памасть. Аслисен усал тĕслĕхĕ вара хăçан та пулин ывăлхĕрĕсен пурнăçĕнче хăйĕн «сассине» пама пултарнине профилактика кунне пĕтĕмлетнĕ вăхăтра халăхпа сӳтсе явнă 5 ача ашшĕ те шутламасть пулмалла.

– Эп ачасене халиччен те пӳрнепе те тĕкĕнмен, – куç мăчлаттармасăр суять арçын.

Утан намăс-симĕсе пĕлмесĕр çапла лаплаттарса хурать:

– Арăма вара «тустаркалап», ытти çемьесенчи пекех.

Милици ĕçченĕсемпе уйрăммăн калаçнă хыççăн шухăшĕсем улшăнаççĕ пулсан кăна ку арçыннăн.

Çул-йĕр правилисене пăснă пĕр çамрăкпа арçын хăйсен йăнăшне ăнланнă пек туйăнчĕ. Çул çине автомашинăпа ӳсĕрле тухиччен е урăллах пысăк хăвăртлăхпа катаччи чупнă чух çакна манса каяс марччĕ: сирĕн айăпа пула этем пурнăçĕ татăлма е çын сусăрăнма пултарать. Инкек тени вара кирек хăш вăхăтра та кирек кама та пырса çапма пултарать. Çавăнпа та çынна усал тăвиччен çав инкек тӳсекен вырăнне шухăшра хамăра лартса пăхмалла мар-ши? Кун пек чухне çул çинче çил пек хăвалас шухăш тен сирĕлĕ.

Пуçĕпех «пĕтмен» çын пĕрре «пиçсе» кайнă хыççăн тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тума кирлех. Профилактика кунне пĕтĕмлетнĕ вăхăтра малтан судпа айăпланнă икĕ арçынна та пăхса тухрĕç. Хăйсем каланă тăрăх та, ял çыннисен шухăшĕсенчен те вĕсем ырă енне улшăнни палăрать.

Сăмахăма вара профилактика кунне пĕтĕмлетсе каланă шухăшсемпе вĕçлес килет. Пурнăçри йĕркесĕрлĕхсемпе çырлахса лармалла мар пирĕн. Хамăрăн пурнăç йĕркеллĕ пултăр, хамăр ачасен пуласлăхĕ уçăмлă пултăр тесе хамăртан килнине йăлтах тумалла. Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи эрех ĕçекен ашшĕ-амăшĕсем те, ытти çĕрте пурăнакансем те çакна вăхăтра ăнланса илсен тем пекехчĕ. **Л. ПАВЛОВА.**

# Шухăшсем тата фактсем

(Хресчен реформи пуçланнăранпа 150 çул çитнĕ май)

Истори страницисем



**(Вĕçĕ. Пуçл. иртнĕ номерте).**

Сăмах май, «хресчен» сăмах «христианин», «крещеный», «новокрещен» сăмахсенчен пулса кайни паллă ĕнтĕ. Çĕр ĕçченĕн çулталăк тăршшĕпех çут çанталăк пулăмĕсене шута илсе, унăн паллисене асăрхаса тата асра тытса ĕçлемелле пулнă. Халĕ те çаплах. Ку ĕçре хресчене христианство тĕнĕн календарĕ те пулăшса пынă. Сăмахран, çурхи Якури уявĕччен (майăн 6-мĕшĕ) улăхсем таптанасран выльăх-чĕрлĕхе кĕтĕве кăларма юраман, Пукравччен (октябрĕн 14-мĕшĕ) пĕтĕм тыр-пула, пахча çимĕçе пухса кĕртмелле пулнă т. ыт. те.

Чăвашсен, ытти халăхсенни пекех, христианствăпа çыхăнман çĕр ĕç уявĕсемпе традицийĕсем те пур. Анлăрах сарăлнисенчен пĕри – Акатуй. Ăна çурхи уйхир ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн ирттереççĕ.

Атеизм науки хуçаланнă вăхăтра та («большевикла хăвăртлăхпа» колхозсем йĕркеленĕ тапхăрта, Аслă Отечественнăй вăрçă тата ун хыççăнхи çулсенче) çĕр ĕçченĕ хресчен пулма пăрахман. Çут çанталăка пăхăнса пурăнмалла пулнă май, çĕршер çул пухăнса пынă ырă та усăллă йăлайĕркене тытса пынă, çав шутра христианство йăлийĕркине те.

Çакна çирĕплетекен пĕр тĕслĕх илсе кăтартас килет. Муркашсен паллă колхоз председателĕпе Е.А. Андреевпа пĕрле ĕçленĕ çынсенчен Евтихий Андреевич мĕнле те пулин пысăк ĕçе пуçличчен яланах хĕвел тухăçнелле тăрса сăхă сăхни çинчен пĕрре кăна мар илтме тӳр килнĕ. Пĕр шутласан, Евтихий Андреевич коммунист, наука хушнă пек ĕçлессине тĕп вырăна хураканскер, çапла хăтланнине курнăçланни теме те пăхĕ хăшĕпĕри. Анчах та кунта этем психологийĕпе, унăн воспитанийĕпе çыхăннă самантсем пĕрремĕш вырăнта тăраççĕ тесен йăнăш пулмасть пулĕ. Çакна тĕрĕс пуçланă ĕç ăнăçлă пуласса шанса, ăна чун-чĕререн ĕненсе, парăнса, юратса, пĕлсе ĕçлекен çыннăн палли теме те юрать. Евтихий Андреевич ертсе пынă хуçалăхăн вара ăнăçусем пулман мар. Аслăрах ăрурисем вĕсене ас тăваççĕ, ырăпа аса илеççĕ.

Глобализаци, урбанизаци, модернизаци процесĕсем тĕнче шайĕнче тахçанах пуçланнă, шав малалла пыраççĕ. Вĕсенчен экологи, тĕрлĕрен чир-чĕр, апатçимĕç çитменнин, терроризм тата ытти проблемăсем юлмаççĕ, хыççăн хăвалаççĕ. Аграрлă Чăваш Республикинче те паянхи кун халăхăн 60 процентĕ хуласенче пурăнать. Тĕнчере цивилизаци тĕлĕшĕнчен малта пыракан çĕр-шывсен стандарчĕсене пăхсан, патшалăха ял хуçалăх апатçимĕçĕпе тивĕçтерме çĕршыври халăхăн 10–12 процентĕ ял хуçалăхĕнче ĕçлени те çителĕклĕ иккен. Анчах та вĕсен чи интенсивлă технологипе, техникăпа усă курса ĕçлемелле, чи пахалăхлă вăрлăхсемпе усă курмалла, ĕçсене чăнах пĕлсе чуна парса пурнăçламалла. Урăхла çул çук тесе палăртаççĕ наука çыннисемпе ытти специалистсем. Паллах, кун пек ĕçлекен çĕр ĕçченĕн пурнăç пахалăх шайĕ те тĕнче стандарчĕсен шайĕнчен кая пулмалла мар.

Çĕр-шыва шăпах çак çул çине кăларас текенсем Раççей шайĕнче те, республикăпа район шайĕсенче те, пĕрре пăхсан, сахал мар: ял хуçалăхĕ енĕпе ĕçлекен министерствăсемпе ведомствăсем, саккунсем йышăнакан органсен ятарлă комиссийĕсем, Раççей ял хуçалăх банкĕ, ял хуçалăх академийĕсемпе университечĕсем, техникумсем, ятарлă тĕпчев институчĕсем... «Хресчен сасси», «Сельская жизнь» хаçатсене, «Сельская новь» журнала тата ытти ятарлă хаçат-журнала та, радиопа телевидени передачисене те çав шутах кĕртмелле. Информацие алла илме кăна ан ӳркен, çав шутра Интернетпа усă курса та.

Çĕр-шывăн влаçра тăракан политика партийĕсем те аграри ыйтăвĕсемпе чылай чухне пĕр шухăшлă. Сăмахран, ял хуçалăхне аталантармалли программăнах илер. Колхоз-совхозсем арканма пуçланă хыççăн тепĕр хут «ирĕке тухнă» хресчене ытлашши никам та васкатмасть паян. Фермер хуçалăхĕ уçатăн-и эсĕ, килти хушма хуçалăх ĕçĕпе пурăнатăн-и е урăх çул суйласа илетĕн – чару çук. Акă пай çĕрĕсене харпăрлăха илмелли вăхăта та патшалăх каллех тăсса панă. Ку хутĕнче 2012 çулхи июльччен. Ĕç-пуç мĕнпе вĕçленет-ха тесе «кĕтсе тăмалли» позицие йышăннисем те çук мар.

Ĕçлес текен мелсем шырать, юлхав-кахал сăлтав шырать. Çакăн йышши халăх каларăшĕсемпе хăй ĕçĕнче пĕрмаях усă куратчĕ районти темиçе хуçалăха нумай çул хушши ертсе пынă паллă председатель Александр Михайлович Михайлов. Кун пек каларăшсем паянхи кун та хăйсен пĕлтерĕшне çухатман. Выртан чул айне шыв юхмасть тенине те манса каймалла мар. Кая юлсан каю шăтать тени те тĕрĕсех.

Нумай специалист фермерсемпе хушма хуçалăхсен ертӳçисен пирĕн тăрăхра коопераци çулĕпе кайсан меллĕрех пулмаллине çирĕплетет. Анчах та хальлĕхе лавĕ вырăнтан тапранасшăн мар-ха. Чылайăшне «ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăх» туйăмĕсем (тен мăн кăмăллăхпа çынна шанманлăх та) чăрмантараççĕ ахăртнех. Нуша кулач çитерни çинчен манса каяс марччĕ. Нуша килсен кăна тытăнсан кая юлмăпăр-и? Хамăр çĕрсем çинче хамăрăнах, Иван Яковлевич Яковлев Халалĕнче каланă пек, «лăпкă та мирлĕ ĕçпе» пĕр-пĕрне пулăшса пурăнасчĕ.

**В. ФЕДОРОВ.**

Муркаш ялĕ.

